*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

# ХРЕСЧЕН САССИ

6 (2519) №
Хакĕ ирĕклĕ

2015
январь кăрлач 30
ЭРНЕКУН

1991 çулхи апрелĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă



## КĔСКЕН

**Февралĕн 19-20-мĕшĕсенче Шупашкарта «Николаевский» суту-илӳ комплексĕнче «Çĕрулми – 2015» курав иртет. «Хальлĕхе курава хутшăнма Раççейри 12 регионтан 50 ытла компанипе предприяти пĕлтернĕ», – хыпарлать ялхуçалăх министерстви. Çĕрулми уявĕн кунĕсенче тĕрлĕ сортпа паллашма, туянма май пулĕ. Хула администрацийĕ ун чухне пенсионерсене туяннă паранка кил умнех çитерсе пама шантарать.**

**ЧР Министрсен Кабинечĕн ларăвĕнче 2014 çулхи IV кварталти пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçене палăртнă: 6988 тенкĕ. III кварталпа танлаштарсан 195 тенкĕ чухлĕ (1,9 процент) ӳснĕ. Вăйпитти ӳсĕмрисене пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçе 7425 тенкĕпе танлашнă, пенсионерсемшĕн – 5732 тенкĕ, ачасемшĕн – 6954 тенкĕ.**

**Чăвашсен пĕрремĕш киноактриси, çыравçи тата куçаруçи Тани Юн çуралнăранпа январĕн 28-мĕшĕнче 112 çул çитрĕ. Паян Етĕрне районĕнчи Палтай ялĕнче паллă актрисăна халалласа асăну хăми уçаççĕ. Ăна шкул çурчĕ çине çирĕплетеççĕ.**

**ЧР Строительство министерстви пĕлтернĕ тăрăх – малтанхи кăтартусемпе килĕшӳллĕн пĕр çын пуçне пурăнмалли çурт тăвас енĕпе Федерацин Атăлçи тăрăхне кĕрекен регионсен хушшинче Чăваш Ен малти вырăна тухнă.**

**Иртнĕ çул республикăра 862,1 пин тăваткал метр чухлĕ (умĕнхи çулхи кăтартуран 103 процент) е кашни çын пуçне 0,696 тăваткал метр чухлĕ пурăнмалли çурт тунă. Атăлçи тăрăхĕнче ку кăтарту вăтамран 0,566 тăваткал метрпа танлашать. Пушкăртсен кăтартăвĕ те начарах мар – 0,651 тăваткал метр, Пенза облаçĕнче – 0,664. Мордови республикинче – 0,394 тăваткал метр, Удмурт тата Пермь тăрăхĕсенче – 0,416 тата 0,418.**

## Мĕн каласа çырнă-ши?

**Чылай чухне вăрлăх пакетĕнче тĕрлĕ саспаллипе цифра асăрхама пулать. Мĕне пĕлтереççĕ-ха вĕсем?**

**А** – паллă пурри вăрлăха альтернариоз чирĕ çулăхсах кайманнине пĕлтерет. Помидор çулçипе çимĕçне ерекен хура паллăсене е хăяр çулçинче хуралса типсе кайнă вырăнсене асăрханă-и? Шăпах çав чир палли ĕнтĕ ку.

**С** – кладоспориоз ересрен çирĕп пулни, урăхла каласан помидор çулçине хăмăрлатакан вируса парăнманни.

**CTV** – ӳсен-тăран çулçине симĕс, çутăсарă тĕспе тĕрлекен хăяр вирусне чăтăмлă пулни. Хăяр вирусĕ хăяра кăна мар, кавăн, кабачок, патиссон, фасоль, кăшман, сухан тата ытти çимĕçе те сиенлет.

**F** – хăярпа помидора шантаракан фузариозпа чирлеменнин палли.

**F1** – пĕрремĕш ăрури гибрид.

N – нематода ересрен шанчăклă.

**Р** – ӳсен-тăрана фитофтора çулăхмĕ.

**Тm** – табак вирусĕ ересрен хăрама кирлĕ мар.

**V** – помидорпа хăяра майĕпен шантарса пыракан чире парăнмасть.

Енчен те вăрлăх чĕркемĕ çинче VF текен паллă пур, ăна фузариоз, урăхла каласан кукша чирĕ, çулăхаймĕ. Харăсах F1TmPCFN паллăсем пулсан çакна пĕлĕр: эсир пĕрремĕш ăрури гибрида, табак вирусне, фитофторона, çулçа хăмăрлантаракан вируса парăнтаракан, ӳсен-тăрана шанасран тата нематода ересрен упракан вăрлăха туяннă.

## Хăçанччен упранать

Арбуз, дыня, хăяр, кабачок, патиссон, кавăн вăрлăхĕ 8 çул таран упранать.

Артишок, пăрçа, фасоль, нимĕç пăрçи – 6 çул.

Редис, йӳç кăшман, çарăк, чĕкĕнтĕр, тутлă кăшман (брюква), купăста, помидор – 5 çул.

Кишĕр, пăрăç, баклажан, салат, шпинат – 4 çул.

Сухан, петрушка, укроп, спаржа, кăшкарути, ревень – 3 çул.

Пастернак, сельдерей – 2 çул.

| ÇАНТАЛĂК | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Шупашкарта | Вăхăт | | 30.01 | 31.01 | 1.02 | 2.02 | 3.02 |
| Температура, $^0$С | 2-4 сехетре | | –14 | –5 | –9 | –5 | –2 |
| | 14-16 сехетре | | –11 | –4 | –3 | –2 | +1 |
| Юр çăвать | | | – | – | – | ⁂ | ⁂ |
| Атмосфера пусăмĕ, мм. | | | 755 | 755 | 752 | 747 | 741 |

## КИЛ

ЯЛ-ЙЫШ | ХӲТЛĔХ | СЫВЛĂХ | ТĔПЕЛ

**ПАЯН** кун тăршшĕ 8 сехет те 27 минут. Уйăх тулса пырать.

Хĕл каçакан Антун кунĕ. Çак кун тĕлне сивĕ ури хуçăлнăн çанталăк ăшăтас енне сулăннăн туйăнать, анчах çакна ĕненме хушман, хыççăнах сивĕ çитет тенĕ.

**ЫРАН** – Ахванеç кунĕ – яланах сивĕ пулакан. Çил-тăман ахăрттарсан – çур вăраха кайĕ.

**ВИÇМИНЕ** – çур епле килессе систерекен Макар кунĕ. Çанталăк уяр пулни – ăшă килессе. Çил-тăман тухсан – Çăварнире те çаплах пулĕ. Çанталăк сивĕ тăни çу лайăх пуласса.

## ЫЙТУ-ХУРАВ

## Груша чирлерĕ

**? Виçĕм çул груша хунавĕ лартнăччĕ. Чĕрĕлчĕ, турачĕсем те хушăнчĕç, анчах тепĕр çулне йывăç çулçисем хăмăр тĕспе витĕнчĕç, унтан типсе çĕре тăкăнчĕç. Сентябрь тĕлне йывăç çап-çарамсăр ĕнтĕ. Мĕн пулчĕ-ши ман йывăçпа? Сиплеме май пур-ши ăна?**

**Нина ПЕТРОВА. Çĕрпӳ районĕ.**

Ахăртнех, грушăна кăмпа чирĕ – филлостиктоз (улмуççипе груша çулçине ярса илекен хăмăр пăнчăллă чир) çулăхнă. Ку чир таçта та тĕл пулать. Çу кунĕсен иккĕмĕш çуррине ăшă та нӳрлĕ çанталăк тăрсан пушшех те вăйлă аталанать вăл. Груша çулçинче малтан уйрăм пăнчăсем палăраççĕ, кайран вĕсем пĕрлешсе сарăлаççĕ те çулçа лаппăшпех хупласа хураççĕ.

Инфекци çĕре ӳкнĕ çулçăпа пĕрле хĕл каçать. Çавăнпа ăна пухса çунтармалла. Çуркунне пуçламăшĕнче (кăчкă сарăличчен) йывăçа 3 процентлă бордос шĕвекĕпе сирпĕтмелле. Çулçă тухиччен тата кăчкă çурăличчен Раек препаратпа, сурхи-çуллахи тапхăрта Скор, Абига-Пик, ХОМ, Гамаир препаратсемпе усă курмалла.

## ШУТА ИЛМЕ

## Вăрлăха – пылпа, сĕтпе

Калча пĕр тикĕс лайăх шăтса тухтăр тесен вăрлăха акиччен марганцовка шывĕнче тытатăп. Е кашни сорта уйрăммăн марльăран çĕленĕ пĕчĕкçĕ хутаçа чиксе икĕ кунлăха ăшă шыв (25 градус тейĕпĕр) янă термоса яратпăр. 45 градус таран ăшăтнă шыва ярсан вара 12 сехет кăна тытмалла.

Петрушка лайăх шăтса тухтăр тесен вăрлăха 4 сехете яхăн ăшă сĕтре тытмалла. Акиччен çапла тунă хыççăн петрушкăпа кишĕр **вăрри вунă кунранах шăтса тухать.**

**Хăяр, томат, пăрăç вăрлăхне** акиччен çур сехет пек марганцовка шывĕнче тытатăп, унтан çавăн чухлех – юхса тăракан шыв айĕнче çăватăп, кайран – талăк майлă кĕл шывĕнче (çур литр ăшă шывра 1 кашăк кĕл ирĕлтерсе пĕр талăк тăрăлантарса лартмалла, кайран сăрăхтармалла та унта вăрлăха ямалла). **Çапла тунă хыççăн вăрлăха нӳрлĕ татăк çине хурса 30 градус ăшăра шăтармалла.**

**Арбуз, дыня вăрлăхне** акиччен малтан марганцовка шывĕпе шӳтермелле, **унтан 3 кунлăха ăшă вырăна лартмалла, каçхине – холодильника.** Кайран вăрлăха пылак калаттарса вĕрилентернĕ çырла эрехне ярса талăкран кая мар тытатăп – кунашкал çимĕç пылакрах пулĕ.

Çак тĕллевпех йӳç кăшмана **пыл янă шывра шӳтеретĕп**, июнь варри иртсен кăна акатăп.

Нихăçан та вăрлăха çĕнĕ уйăх е тулли уйăх пулнăранпа виçĕ кун иртмесĕр акмастăп. **Тымар çимĕçе (кишĕр, кăшман...) каталăкан уйăхпа акмалла, çĕр çийĕнче ӳсекеннине (хăяр, помидор...) – тулакан уйăхпа.**

**Светлана МИХАЙЛОВА.**

## КИЛ КАРТИ

## Шĕпĕнрен хăтăлма

Качака çиллинче йĕпе кĕсен (экзема) пулсан ăна стрептоцид маçĕпе сĕрмелле. Çулла кĕсен хурткăпшанкă сыртнă хыççăн тухать. Кун пек чухне пихтоин маçĕпе сĕрни пулăшать.

Шĕпĕнрен хăтăлма вара рафинадламан тип çу пулăшĕ. Сухана вĕтĕ-вĕтĕ турамалла, 2-3 кашăк çăнăх хушмалла, унтан пăс çийĕн тытса ăшăтнă пĕр стакан чухлĕ тип çу хушса пăтратмалла. Хутăш сивĕнсен ăна марля витĕр сăрăхтарса тĕксĕм тĕслĕ кĕленчене ямалла. Качака чĕччине унпа сĕтне суса илнĕ хыççăн çеç сĕрмелле. Сăвиччен вара çиллине шăратнă сысна çăвĕпе сĕрмелле. Çĕрулми хуппи ярса вĕретнĕ шывпа çуни те аван.

**Марина КОЗЛОВА.**

## Вăхăтра касмалла

Хĕлле сурăхăн тĕп апачĕ – утă. Çаран, клевер, люцерна уттин пахалăхĕ ăна хăш вăхăтра çулнинчен, мĕнле типĕтнинчен тата упранинчен килет. Пĕр сурăха кунне 1,5-2 килограма яхăн утă кирлĕ. Ват сурăха пăрçа улăмĕ те хушса пама юрать. Выльăх кăшманĕ пани апат пахалăхне ӳстерет. Ăна тураса памалла, выльăх пуçне 2-3 кг таран. Сĕлĕ çитерни сĕт антарма пулăшать, такан ар пултарулăхне ӳстерет.



Çитĕнсе çитнĕ сурăха кунне 3-6 литра яхăн шыв кирлĕ, çулла ытларах. Шывăн вăтам температури 10-15 градус пулмалла. Сивĕ шыв ĕçтерни сиенлĕ, пĕтĕ выльăхшăн хăрушă та.

Хĕллехи вăхăтра выльăх тăршшĕпех картара тăнă вăхăтра унăн чĕрнисем ӳссе каяççĕ, çуркаланаççĕ. Чĕрнене вăхăтра касмасан сурăх уксахлама пуçлать. Çуркаланнă чĕрне шыççăнсан пăсăлнă сыр евĕр шăршă кăларма тытăнать. Чир амăшĕнчен путеке ерет, çавна май вăл япăх ӳсет, чирлет. Уксахлакан сурăха кĕтĕве кăларма юрамасть. Утма йывăррисĕр пуçне вăл кĕтӳ ӳрекен вырăна чир ертме пултарать. Çавăнпа выльăх чĕрнине пăхсах тăмалла, уйрăмах кĕтĕве кăларас умĕн. Каснă чĕрнене 5 процентлă уксус кислотипе хутăштарнă 5 процентлă формалинпа сĕрмелле. Каснă пайне вара çунтарса ямалла.

АРĂМСЕМ



**Картасăр хуралтă хăвăрт саланать, арăмсăр кил-çурт та часах нĕрсĕре тухать. Хĕрарăмсăр арçын чылай чухне пурнăç илемне çухатать: е ĕçке ерет, е çапкаланчăка тухать. Упăшкипе арăмĕн пĕр урапа çинче ларма, ĕмĕр тăршшĕпех пĕр-пĕриншĕн тĕрев пулма арăм ăслă та чăтăмлă пулни кирлĕ.**

**Чапа тухнă арсен çумĕнче яланах ăслă та вăйлă хĕрарăмсем пулнă. Ют çын куçне курăнман ĕçĕпе вĕсем мăшăрне тата çӳлерех çĕкленме пулăшса пынă. Мĕнлерех вĕсем чăн-чăн арăмсем? Çак ыйту тупсăмне хуравлама хаçатра «Арăмсем» ятпа çĕнĕ ярăм уçатпăр. Тĕпелĕн паянхи хăни – Нина Павловна ИВАНТАЕВА.**

# Ырă арăм – ырă шăпа

*– Хĕрарăмăн тӳсĕмлĕхĕ умĕнче яланах пуçăма таятăп, – тет агроном арăмĕнчен республика правительствин пуçлăхĕн пĕрремĕш çумĕ таран «ӳснĕ» Нина Павловна. – Аттен ашшĕ патша çарĕнче офицер пулнă. Икĕ хутлă чул çурт лартнă. Сталин вăхăтĕнче мĕнпур пурлăхне раскулачить тунă. Асанне хуçăлса ӳкмен. Атте сельпора тĕп бухгалтерта ĕçленĕ. Хăйĕнчен 8 çул çамрăкрах тăлăх хĕре качча илнĕ. Çичĕ ача çуратнă вĕсем. Эпĕ – çиччĕмĕш. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче атте вилет. Темле йывăр пулсан та анне ĕне усрама пăрахман. Çавăнпах çын пултăмăр пулĕ. Мăшăрăн, Петр Васильевичăн, амăшĕ те упăшкине вăрçăра çухатнă. Çынсем пĕр каçалăк тырă вырнă çĕре иккĕмĕшне тухма хал çитернĕ вăл. Правурлăхĕ, сăпайлăхĕ, йăвашлăхĕ, çирĕплĕхĕ – пурте пулнă вĕсен. Çавă ачисене те куçнă.*

## Тӳсĕмпе ӳсĕм пĕр тăван

**– Нина Павловна, пулас мăшăрăрпа паллашнине аса илсемĕр, тархасшăн.**

– Иксĕмĕр те ялхуçалăх институтĕнче агрономи факультетĕнче вĕреннĕ. Ивантаева пĕрремĕш курсранах пĕлнĕ, анчах пĕр-пĕрин патне туртăнасси 5-мĕш курсра çеç пуçланнă. Темшĕн мана хамран кăшт асларах, салтака кайса килнĕ çынпа çӳремелле пек туйăнатчĕ, çавăнпа унпа сăмахлас текен шухăш пулман. Пĕрле вĕренекен хĕрсем эпĕ унпа калаçасшăн пулманнинчен тĕлĕнетчĕç. «Лайăх ача-çке, ăслă. Сана çак тери килĕштерет», – тетчĕç.

Вĕренсе тухсан пĕрлешрĕмĕр. Хĕрлĕ Чутай районĕнче ĕçлеме пуçларăмăр. Эпĕ – районти вăрлăх инспекцийĕнче, вăл – «Октябрь» колхозра агрономра.

Пилĕк сехетре тăрса ĕçе каятчĕ. Мотоциклпа. Ăна яланах апат çитерсе кăларса яраттăм. Ун чухне район центрĕнче хваттер тара тытса пурăннă эпир. Нумаях та ĕçлеймерĕ – салтака илсе кайрĕç. Эпĕ хырăмри 3 уйăхри ачапа тăрса юлтăм. Салтак арăмĕ тесе мана хваттер пачĕç. Петр Германире танкистсен чаçĕнче службăра пулчĕ. Вăл салтакран килнĕ тĕле манăн Таня утма та пуçланăччĕ ĕнтĕ. Паянхи пек астăватăп: хĕр пĕрчи валли вăл тĕксĕм кăвак тĕслĕ, пĕрмеллĕ çав тери хитре кĕпе илсе килнĕччĕ. Уншăн чунтан хĕпĕртенĕччĕ.

Колхоз председательне лартрĕç упăшкана. Ун чухне вăл 24 çул та тултарманччĕ. Самаях ĕçлерĕ. Унтан Хĕрлĕ Чутай райисполкомĕн ялхуçалăх управленийĕн пуçлăхĕнче тăрăшрĕ.

Хам та, вăрлăх инспекцийĕн ертӳçи пулнă май, ялсем тăрăх сахал мар çӳренĕ. Ӳксе çурăлсан та вăрлăха кондицие çитермелле-çке. Ачасене садикрен илме ĕлкĕрейменни те пулнă. Воспитательсем те илсе кайкаланă вĕсене.

Икĕ ача, кил-çурт, пахча – ытларах хам çине тиеннĕ. Улмуççисем лартса чăн-чăн сад туса ятăм, тем тĕрлĕ çырла туса илнĕ. Компот нумай хатĕрленĕ.

1977 çулта Ивантаева парти обкомĕн инструкторĕ пулма çирĕплетрĕç. Куçас килмест Чутайран. Макăрнăччĕ те. Мăшăрăм «Чувашхмельпром» пĕрлешӳве ертсе пыма пуçларĕ. Эпĕ – Мускав районĕнчи социаллă пулăшу пайĕн заведующийĕ. Пурăнсан-пурăнсан Петр Васильевича каллех Чутая парти райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма ячĕç. Мана та арăмĕн пĕрле пулмалла тесе районти собеса ĕçлеме куçарчĕç. Хамăр Чутайра ĕçлетпĕр, ачасем – хулара. Каçхине Шупашкара каяттăм, ирпе – Чутая. Çул çинче мĕн чухлĕ асап тӳсмен-ши? Автобуспа, çула май машинăсемпе çӳреттĕм. Çапла çулталăка яхăн хĕн куртăм. Кайран ывăлăм чирлесе кайрĕ. Вара упăшка та кун пек ĕç тухмасть тесе хăйне Шупашкара куçарма ыйтрĕ. Куçнă тĕле ман валли унчченхи çĕрте ĕç вырăнĕ çукчĕ ĕнтĕ. «Чувашагрохими» трестра экономист пулса ĕçлеме тытăнтăм. Экономист пĕлĕвĕ-и? Экономикăпа технологи техникумне те пĕтернĕ эпĕ.

## Кашни хăй çулне суйлать

**– Чăн-чăн çынна йывăрлăх çĕнейми тăвать, хавшаккине çапса хуçать тени тĕрĕсех. Петр Васильевича министра лартнине епле йышăнтăр?**

– Ялхуçалăх министрне ăна лартас умĕн пĕр кандидатурăна пăхса тухма Мускава янă. Хайхине министр пулма ирĕк параççĕ. Çирĕплетесси çеç юлать, анчах вăл тăруках министр пулма килĕшмест. Мĕншĕн? Арăмĕ хирĕç пулнă иккен. Çавăн хыççăн Петр Васильевич кандидатурине сĕнеççĕ. Хамăра хушнине эпир яланах пĕр сăмахсăрах пурнăçланă. Ăçта каланă – çавăнта кайнă, ĕçленĕ.

**– Петр Васильевич Раççей Федерацийĕн Патшалăх Думин депутачĕ пулма та суйланнăччĕ вĕт?**

– Çапла. Ун чухне Ельцинран çак ятпа салам хучĕ те килнĕччĕ. Анчах эпĕ темшĕн Мускава каймаллинчен хăраса ӳкрĕм. Каймастăм терĕм. Упăшкам вара манран иртмерĕ.



Студент чухне.
1963 çул.

Хальхи вăхăтра çынсем депутат пулассишĕн миллионĕ-миллионĕпе укçа кăларса хураççĕ тет те… Мăшăрăм депутата кайманшăн пач та кулянман. Тепĕр чух шӳтлесе упăшкана тĕксе те илетĕп: «Мускава арăмсăрах каякансем те пур-çке. Эсĕ мĕншĕн каймарăн?».

**– Хăш çулпа утассине этем хăй суйлать, çапах та хăвăра мĕншĕн кайман пек туйăнать?**

– Арăмĕ пыма килĕшменни хытах шухăшлаттарнă курăнать. Кирек мĕн каласан та, кил çынни вăл. Çемье, йăх пĕлтерĕшне мала хураканскер. Пĕлетĕр-и, хамăр йăха тĕпчесе 9-11 сыпăк таран тупса палăртрĕ.

Çине тăрсах ял историне тĕпчерĕ. Мускаври, Чĕмпĕрти архивсенче нумай чакаланса ларчĕ. Кĕнекелĕх материал пухрĕ.

**– Министр арăмĕ пулма мĕнлерехчĕ?**

– Пысăк çын арăмĕ тесе мухтанас, мăнаçланас туйăм нихăçан та пулман. Унăн хăйĕн ĕçĕ. Манăн – хамăн. Вăл вăхăтра эпĕ урă пурнăç тытса пыракансен пĕрлешĕвне ертсе пынă. Тĕрĕссипе каласан, хамăн ĕç те çав тери яваплăччĕ: е тĕрĕслев килет, е лицензи илессишĕн чупмалла. Унăн ĕçне сăмсана питех чикмен. Киле килсен кун тăршшĕнче мĕн-мĕн тунисене каласа паратчĕ. Эпĕ килĕшсе пуçа ухаттăм. Нихăçан та хирĕçлемен, вăл тĕрĕс йышăну тунине чунпа ĕненнĕ. Ялан ĕç çинчен шухăшланă. Республикăри профсоюз канашĕн председателĕнче те чылай çул ĕçлерĕ.

Хуняма, анне тесе чĕннĕ-ха эпĕ ăна, пирĕн патра пурăннă вăхăтра пĕрмаях ĕçрен час килменшĕн ӳпкелешетчĕ. «Çынсем тахçанах килнĕ, эрех ĕçсе урама тухма та ĕлкĕрнĕ ав. Эсир вара тăршшĕпех хут çыратăр. Сире кĕтсе кантăкран пăхса тăн тухать», – тетчĕ.

**– Паян кунччен ĕçке ернĕ çынсене пулăшассипе ĕçлетĕр. Чылайăн килеççĕ-и сирĕн пата?**

– Пирĕн организаци витĕр ку таранччен 30 пин ытла çын тухнă. Уйăхне 50-60 çын сипленет. Эрех ĕçес килнине çурçуллăха, çулталăклăха сиретпĕр.

Пĕр хĕрарăм упăшкине пирĕн патра сипленĕ хыççăн вăл ялта пĕрремĕш арçын пулса тăнине каласа савăнтарнăччĕ.

Тахçан сĕт пуçтаракан предприниматель сипленнĕччĕ. Кайран вăл пĕтĕм бригадине ертсе килчĕ. Нумаях пулмасть каллех çĕнĕ çынпа килчĕ.

– Ыттисене мĕншĕн илсе килмерĕн? Вĕсене сипленĕренпе 2-3 çул та иртрĕ-çке, – тетĕп.

– Халĕ ĕçмеççĕ, – тет хайхи. – Машинăсем илчĕç. Лайăх ĕçлесе илеççĕ, культурăллă. Эрехе аса та илмеççĕ.

Çыннăн хăйĕн пуçĕпе пурăнмалла. Мускава ĕçлеме çӳрекенпе калаçни аса килет. «Бригадăра 6-7 çын. Укçаллă çынсене коттеджран пуçласа ытти хуралтă таран туса паратпăр. Уйăх çурăра мĕнпур ĕçе вĕçлетпĕр. 600 пинрен кая мар лартатпăр. Тăрăшса ĕçлетпĕр, çавна май алран алла кăна куçатпăр. Пĕрне вĕçленĕ çĕре тепри тупăнса тăрать. Ĕçекен пĕр çын та ан пултăр ман бригадăра», – терĕ вăл.

## Пурнăç çынни

**– Ивантаев «Чувашхмельпрома» ертсе пынă çулсенче Раççей хăмлин 80 процентне Чăваш Енре çитĕнтернĕ. Чăваш хăмлин ячĕ-сумĕ кĕрлесе тăнă. Халĕ вăл шайран нимĕн те çук тесен те юрать. Килте хăмла çинчен пăшăрханса калаçнине илтетĕр-и?**

– Хăмлана вăл чăннипех те питĕ юратать. Пахчара ăна ятарласа ӳстерет. Малтан тем пысăкăш лаптăк çинче çитĕнтеретчĕ. Каярах, хам мăкăртаткаланипе, темиçе тĕп çеç хăварчĕ. Нумаях пулмасть вăл Çĕрпӳре хăмла чăваш ылтăнĕ пулнине ĕнентерсе ăна çĕнĕрен чĕртсе ямалли çинчен калаçнăччĕ. Хăмлан чапне питĕ тавăрасшăн та ...

Муркаш районĕнчи Рыккакассинче хуçалăх тытатпăр. Çулла унта питĕ хитре. Газон, пĕве, бассейн, тараса – пурте пур. Теплицăра 150 кăк таран помидор лартатпăр. Томат сĕткенĕ тăватпăр. Вĕлле хурчĕ тытатпăр. Розари, клематис... – тем тĕрлĕ чечек те пур. Мăшăрăм уйрăмах кĕлчечекне кăмăллать.

**– Чечек юратакан арçынна вăр-вар тупма çăмăлах та мар пек туйăнать.**

– Кĕлчечекне хĕле хирĕç ялан тăрăшса хупласа хăварать. Çăвĕпех пахчара ларнă бегони, герань савăчĕсене кĕркунне котельнăйне лартать. Хĕл тăршшĕпе эрнере пĕр хут вĕсене шăварса тăрать. Виноград тĕмĕсене касса тирпейлет, улмаçырла йывăçĕсене сыпать.

**– Аллă çул пĕрле пурăнса пĕрпĕрне кĕвĕçме сăлтав пулман-и?**

– Санăн арçыннуна никам та юратманни лайăх-и вара? Лайăха юратаççĕ, хисеплеççĕ. Çын кăмăлне кайманни ман кăмăла та каймĕ. Лайăх çынпа калаççан чун уçăлать. Мăшăрăм пирки нихăçан та иккĕленмен. Çемьесĕр пурăнаймасть вăл. Ачасем пĕчĕк чух алăк уратинчен каççанах «Аннĕр килте-и?» тесе ыйтатчĕ. Халĕ те ватлăхра: «Эс çук чух килте тăрас та килмест», – тет. Пурнăç çынни вăл – унпа пурăнма çăмăл.

**– Çичĕ теçеткерен каçнă пулсан та халĕ те сăрланатăр, çӳçĕре пĕвететĕр. Ятуллă та чипер çӳретĕр.**

– Яланах лайăх тăхăнма тăрăшнă. Хамах çĕлетĕп, çыхатăп. Крючокпа çинçе çипрен илемлĕ кĕпе çыхса тăхăннăччĕ. Никамăн та çук унашкалли, Ивантаев арăмĕн пур. Лайăх упăшка çумĕнче арăмĕн те ятуллă пулмалла ĕнтĕ. Арăм илемĕ ар пит-куçне çутатать.

**– Çемье телейĕ мĕнре тесе шухăшлатăр?**

– Ачасемпе мăнуксем сывă пулнинче. Хамăр ăспа-тăнпа çӳренинче. Пĕр-пĕрне ăнланнинче. Укçа çитсе пынинче. Татуллă пурăннинче. Ачамăрсем çемйипе килĕштерсе пурăнччăр тесе хамăр пата хăнана чĕнсех тăратпăр. Вĕсем лайăх пурăнсан пире те лайăх. Чун выртнă ĕçре тăрăшни те телей.

**– Чун туртнипех халĕ те ĕçлетĕр-и?**

– Пĕлекен ĕçе мĕншĕн тумалла мар. Бухгалтери ĕçне, отчетсене пĕтĕмпех хам туса пыратăп. Килте мĕн туса лармалла? Ытларах çуран утма тăрăшатăп. Çамрăкрах чух Порфирий Иванов меслечĕпе çемйипех хамăр тăрăх сивĕ шыв яраттăмăр. Ывăлпа кин халĕ те çак йăлана пăрахман-ха. Эпир вара ирсерен мăшăрпа сивĕ шывпа йĕпетнĕ алшăллипе пилĕк таран сăтăрăнатпăр, шăм-шака хускататпăр. Тĕрлĕ курăкпа чей вĕретсе ĕçетпĕр. Пурнăç техĕмне туйса пурăнатпăр.

*Чăваш ырă арăмпа пурăнакана ырлăх тупнипе, Турăран тивлет илнипе танлаштарнă. Ивантаевсем иккĕшĕ те тивлетсĕр юлман пек туйăнать.*

**Елена НИКОЛАЕВА.**

ХӐТЛĔХ

# Патшалăх пулăшăвĕпе çыхăннă



Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Патшалăх Канашне янă Çырăва хакласа РФ Пенси фончĕн Чăваш Енри уйрăмĕн ертӳçи **Роза КОНДРАТЬЕВА** çапла пĕлтерчĕ:

– Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев хăйĕн Çырăвĕнче демографи лару-тăрăвĕ лайăхланнине, ача çураласси ӳсние палăртни – тĕрлĕ енлĕ патшалăх пулăшăвĕ кӳнин кăтартăвĕ.

Чăваш Енре икĕ е ытларах ачаллă 58 пин çемье федерацин амăшĕн капиталĕн сертификатне илнĕ. Вĕсенчен 35 пин çемье çав укçапа пурăнмалли условисене лайăхлатнă, ачисене аслă шкулта вĕрентме тата садике çӳретнĕшĕн тӳлеме усă курнă. 2015 çултан амăшĕн укçи 453 пин тенкĕпе танлашрĕ.

Амăшĕн капиталĕн программи тата икĕ çул вăйра пулĕ. Çак тапхăрта çуралакан тата усрава илекен ачасен йышĕ ӳсессе шанса тăратпăр. Амăшĕн укçипе усă курмалли вăхăта вара нихăш енчен те чикĕлемен. Ачисемпе çемье ырăлăхĕ çинчен кăна шухăшлакан амăшĕсене капиталăн пĕр пайне хăйсен пулас пенсине ӳстернĕ çĕре те яма сĕнес килет – вĕсен кун пек ирĕк пур.

Амăшĕсене патшалăх пулăшăвĕ парассине кăçалтан вăя кĕнĕ çĕнĕ пенси формулинче те палăртнă. Ачасемпе çулталăк çурăна çитиччен ларнă вăхăта страхлав стажне пĕтĕмпе 6 çул таран (4 ача çуратсан) кĕртеççĕ. Çав тапхăршăн ятарлă пенси коэффициенчĕ шутласа параççĕ. Унăн виçи кашни ачашăн ӳссе пырать: иккĕмĕш ачашăн 2 хут, виççĕмĕшпе тăваттăмĕшĕшĕн – 3 хут. Çапла майпа тăвату ача çуратса вĕсене пăхса пĕтĕмпе 6 çул отпускра пулнă амăшĕ 24 коэффициент пухать, урăхла каласан 28 пин тенкĕ шайĕнчи ĕç укçи таран. Нумай ачаллă çемьешĕн ку лайăх пулăшу.

# Тĕрĕсех шутланă-ши?

**? Патăрьел районĕнчи пенси уйрăмĕ манăн юлашки çулсенче ĕçленĕ тапхăра темшĕн шута илмен. 1999 çулта эпĕ 4 уйăх та 21 кун ĕçленине стажа кĕртмен. Унсăр пуçне колхозра вăрçă вăхăтĕнче каникулта ĕçленине 2010 çулта судпа çирĕплетнĕ хыççăн валоризаци суммине 40 тенкĕ кăна ӳстерсе тӳлеме тытăнчĕç. Çӳлте асăннă тапхăра стажа кĕртсе валоризаци туса индексацие тĕрĕсех палăртнă-ши?**

**А. ХИТРОВ. Патăрьел районĕ, Пăлакасси ялĕ.**

РФ Пенси фончĕн Чăваш Енри уйрăмĕн пресс служби сирĕн çырăвăра пăхса тухса çапла хурав пачĕ:

– 2002 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен ĕçленĕ тапхăра ĕçпе тивĕçтерекен Пенси фондне тăратнă сведенисене тĕпе хурса çирĕплетеççĕ. Эсир 1999 çулта ĕçленĕ тапхăра ĕçпе тивĕçтерекен сведенисене тăратнă хыççăн кăна стажа кĕртнĕ. Сирĕн ĕç стажĕ 45 çултан нумайрах пулнипе (стаж коэффициентне 0,75 виçерен ытла шута илмеççĕ) пенси виçи улшăнман.

2010 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче ĕç пенсисене валоризаци тунă, граждансен 2002 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне шутланă пенси капиталне 10 процент тата 1991 çулччен ĕçленĕ кашни çулшăн 1 процент хушса ӳстернĕ.

Эсир колхозра вăрçă вăхăтĕнче каникулта ĕçленине судпа çирĕплетнĕ стажа валоризаци тума Пенси фондне тăратнă. Саккунпа килĕшӳллĕн 2010 çул вĕçлениччен валоризаци тума тăратнă документсемпе пенси виçине саккун вăя кĕнĕ кунран – январĕн 1-мĕшĕнченех ӳстерсе шутланă. Çапла вара сире ватлăхра паракан пенси укçине тĕрĕсех шутласа панă.

Граждансен уйрăм кăтартăвĕсем, вăл шутра пенси виçи те, конфиденциаллă информаци шутланать. Хăвăрăн индексаци тĕрĕсех пулнине тĕрĕслеттерме вырăнти пенси уйрăмне çитме сĕнетпĕр.

ЭСИР ЫЙТНĂЧЧĔ

# Виçеллĕ усă курмалла

**? Панулми сĕткенне ĕçни усăллă-и? Усăллă пулсан ăна кунне мĕн чухлĕ ĕçмелле? Хамăр ял çынни панулми сĕткенне ĕçсе вар-хырăм чирĕпе чирлерĕм тесе ĕнентерет. Тĕрĕсех-ши?**

**Николай ЕГОРОВ. Муркаш районĕ, Анаткасси ялĕ.**



1 Ученăйсен шучĕпе кунсерен пĕрер стакан панулми сĕткенĕ ĕçни вăхăтсăр ватăласран, ăс-тăн хăвачĕ чакасран упрать. Кунсерен 200-300 мл сĕткен ĕçсен çу çаврăнăшĕ лайăхланать, юн холестеринран тасалать, юн тымарĕсем çирĕпленеççĕ. Çавăнпа панулми сĕткенĕ инфарктпа инсульт пуласран хӳтĕленмелли чи лайăх хатĕр шутланать.

2 Гипертони чирĕнчен, самăрăлнинчен тата атеросклерозран та усăллă вăл. Кунне çуршар стакан апатланиччен 15 минут маларах ĕçмелле.

3 Авитаминоз, чĕрепе юн тымарĕсен чирĕ чухне панулми сĕткенне лимон е томат сĕткенĕпе пĕрле ĕçсен аванрах.

4 Панулми сĕткенĕ пӳрери тата ват хăмпинчи чула (1 см пĕчĕкреххине) ирĕлтерме пултарать. Çакна тума 3 кунччен 500-шер мл тин кăларнă панулми сĕткенне кашни 2 сехетрен ĕçсе тăмалла. Пĕрремĕш кунне ирпе 8 сехетре 1 стакан сĕткен ĕçмелле, икĕ сехет иртсен – 2 стакан, çапла каçхи 8 сехетчен. Çав хушăра урăх апат-çимĕç çиме юрамасть. Иккĕмĕш кунне çакна малалла тăсмалла. Виççĕмĕш кунне пĕрремĕш стакана пушатнă хыççăн çур сехетрен 120 мл олива çăвĕ ĕçсе кăштах панулми сĕткенĕпе сыпса ямалла. Виçĕ кун иртсен вĕри ванна кĕмелле. Çакăн хыççăн чулпа хăйăр тухма пуçлĕ. Çапах та çак меслетпе сипленичче малтан тухтăрпа канашламалла.

5 Иммунитета ӳстерет. Тухтăрсем пĕчĕк йӳçеклĕ гастритпа аптракансене йӳçĕкрех сортлă панулми сĕткенне ĕçме сĕнеççĕ. Унти пектин вар хытнипе кĕрешме, организма сиенлĕ япаласенчен тасатма пулăшать.

6 Панулми сĕткенĕнчи клетчатка холестерин шайне йĕркелеме пулăшать. Кунсерен 200 мл сĕткен ĕçни юн çаврăнăшне йĕркелет, юн тымарĕсене пиçĕрех те çирĕпрех тăвать.

7 Панулми сĕткенĕ Альцгеймер чирĕ аталанас хăрушлăха та сирме пултарать. Çакна ученăйсем шăшисем çинче сăнав ирттерсе тĕпчесе пĕлнĕ. Пуç миминчи юн тымарĕсен склерозĕ аталанасран кунсерен 300 мл сĕткен ĕçмелле.

8 Подагра чирĕнчен, веществосен çаврăнăшĕ пăсăлсан та аван панулми сĕткенĕ, микробсене пĕтерме пулăшать.

Сахăр диабечĕпе нушаланакансен симĕс панулмирен кăларнă сĕткене çеç ĕçмелле, мĕншĕн тесен унта сахăр шайĕ сахалрах.

**Камсен панулми сĕткенне ĕçме юрамасть-ха?**

Пысăк йӳçеклĕ гастритпа, хырăмлăх е пыршăлăх язвипе чирлекенсен, хырăмлăхай парĕ касса ыратсан панулми сĕткенĕ ĕçме юрамасть.

Кăкăр ĕмĕртекенсен пирвайхи уйăхсенче тин кăларнă панулми сĕткенне пачах та ĕçме юрамасть, пепкен хырăмĕ кӳпĕнсе кайма пултарать.

Сывă çынсен кунне 1 литртан ытла сĕткен ĕçме юрамасть. Виçесĕр усă курсан диарея, метеоризм пулма, хырăм айĕ ыратма пултарать. Панулми сĕткенĕн йӳçеклĕхĕ шăл эмалĕшĕн сиенлĕ. Çавăнпа ăна ĕçнĕ хыççăн шăла тасатмалла. Эмел тавраш унпа сыпса ямалла мар, мĕншĕн тесен вăл эмел витĕмне вăйсăрлатса организма наркăмăшлантарма пултарать.

РЕКЛАМА, ПĔЛТЕРӲСЕМ

*СУТАТĂП / ПРОДАЮ*

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89674704677.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89674704677.

**4. Немецкие пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Пенсионерам скидки. Замер. Доставка – бесплатно. **Без выходных. Т. 8-987-576-65-62.**

**5. Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 37-28-74.

**14. Станки для валяния валенок.** Т.: 8-927-861-75-89, 8-937-381-05-85.

**15. КИРПИЧ.** Т. 89613393363.

**17. Песок, гравмассу, керамзит,** чернозем, навоз. Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**22.** Пластиковые **ОКНА – немецкое качество.** Дёшево. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89370101054.**

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Т. 89061355241.

**САНАТОРИЙ "НАДЕЖДА"**

**УВАЖАЕМЫЕ ВЕТЕРАНЫ И ПЕНСИОНЕРЫ!**

**Санаторий «Надежда» поздравляет Вас с Новым годом и Рождеством Христовым и предлагает с 12 января 2015 года санаторно-курортные путёвки (10 дней) по сниженным ценам:**

~~18000 руб.~~, **16500 руб.**

**В стоимость включены проживание, питание, лечение.**

**К ВАШИМ УСЛУГАМ:** ● уникальные методы лечения различных заболеваний, ● 4-х разовое питание (заказное меню), ● сауна 2 раза в неделю, ● бассейн ежедневно.

Наличие санаторно-курортной карты обязательно!

**Спешите! Количество путевок ограничено!**

**Справки по тел.: /8352/ 77-04-04, 77-12-70.**

**г. Новочебоксарск, ул. Набережная, 46**

Лицензия ЛО-21-01-001130 от 05.08.2014 выдана Мин. здравоохранения и соцразвития Чувашской Республики

ИМЕЮТСЯ ПРОТИВОПОКАЗАНИЯ, ПРОКОНСУЛЬТИРУЙТЕСЬ СО СПЕЦИАЛИСТОМ

## ЧĂВАШ НАЦИ РАДИО ПРОГРАММИ (72,41 УКВ, 105 FM хумсем çинче)

**Тунтикун, февралĕн 2-мĕшĕ**

6.30-7.00, 7.10-8.00 Ирхи кăмăл! (12+) 8.10-8.30, 11.10-11.30, 15.10-15.30, 16.10-16.30, 17.10-17.30, 18.10-18.30, 19.10-19.30, 20.10-20.30, 21.10-21.30, 23.10-23.30 Юрă вăчăри. (12+) 8.30-9.00, 15.30-16.00 Çĕр сум. (12+) 9.10-10.00 Неформат. (12+) 10.10-10.30, 22.10-22.30 Тăван юрă-кĕвĕ. (12+) 10.30-11.00 Социальный вопрос. (12+) 11.10-12.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 12.10-14.00 Чĕререн тухакан сăмахсем. (12+) 14.10-15.00 Путешествие в историю чуваш. (12+) 15.30-16.00 Пултарулăх çулĕпе. (12+) 16.30-17.00 Тăван ăс-хакăл. (12+) 17.30-18.00 Радиовулав. (12+) 18.30-19.00 Тема дня. (12+) 19.30-20.00 Тĕплĕ калаçу. (12+) 20.30-21.00 Уйăхпи юмахĕсем. (6+) 21.30-22.00 Çемье ăшши. (12+) 22.10-23.00 Янра юрă. (12+) 23.30-24.00 Присягая Родине. (12+)

**Çĕнĕ юрă** 6.05-6.10, 7.05-7.10, 8.05-8.10, 9.05-9.10, 10.05-10.10, 11.05-11.10, 14.05-14.10, 15.05-15.10, 16.05-16.10, 17.05-17.10, 18.05-18.10, 19.05-19.10, 20.05-20.10, 21.05-21.10, 22.05-22.10

**Тунтикун – эрнекун**

6.00, 7.00, 12.00, 13.00, 15.00, 18.00, 20.00, 22.00 - Хыпарсем. (12+)

8.00, 9.00, 11.00, 14.00, 16.00, 17.00, 19.00, 21.00, 23.00 - Новости. (12+)

**Ытларикун, февралĕн 3-мĕшĕ**

